4153
41-230

ЮТҪĔРШЫВ ПИСАТЕЛĔСЕН КАЛАВĔСЕМ

МАРК ТВЕН

# СИКЕКЕН ШАПА

КАЛАВСЕМ



Чăвашгосиздат — 1941

МАРК ТВЕН

# СИКЕКЕН ШАПА

(*КАЛАВСЕМ*)

*Вырăсларан*
*И. О. Молодов*
*куçарнă*

11
б.к.п.

На память другу и учителю по драм. искусству Леонтьеву от Молодова 13/X-49г.

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР ◆ 1940

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР



## МАРК ТВЕН

*(1835—1910)*

1862 çулта, август уйăхĕн шăрăх кунĕнче, Америкăн Вирджини хули урамне ывăнса çитнĕ, тусанпа витĕннĕ, сарлака шлепкепе кўпшек атă, тĕс кайнă кăвак кĕпе тăхăннă, пиçиххийĕ çумне револьвер çакнă çулçўрен килсе тухнă. Хулпуç-çийĕ çине вăл одеялпа чĕркенĕ хăйĕн пурлăхне уртса янă. Вăл çак хулари хаçат редакцине кĕнĕ те, çыххине урайне хурса, йывăррăн пукан çине ларнă.

— Манăн ура штирборд* тăрăх кĕç-вĕç татăлса ўкет,—тенĕ вăл.—Мана халĕ пĕр çĕр ярд кантраччĕ, унсăрăн эпĕ пайăн-пайăн саланса кайма пултаратăп.—Пĕртак чĕнмесĕр ларсан вăл

*) Штирборд—корабль çинчи лоцман вырăнĕ.

хушса хунӑ:—Эпӗ редактора курас тетӗп. Эпӗ Клеменс ятлӑ; эпӗ хаҫатра ӗҫлеме килтӗм.

Ку ҫын аякран, ҫӗр вӑтӑр миль инҫетрен, ылттӑн шыракансен лагерӗнчен килнӗ, унта вӑл ылттӑн шыраса тупас ӗмӗтпе кварц ватса хӑйӑр ҫунӑ. Вӑл кунсенче пӗтӗм хӗвеланӑҫри Америкӑна «Ылттӑн чирӗ» ярса илнӗ. Редактӑрпа калаҫнӑ чухне Клеменс пӗрехмай ҫавӑрӑнкаласа утса ҫӳренӗ; ку унӑн ӗлӗкхи йӑли пулнӑ, мӗншӗн тесен вӑл горняк пуличчен Миссисипи шывӗ ҫинче лоцман пулса ӗҫленӗ, унта вӑл лоцманӑн ҫавракарубки ҫинче утма ҫапла хӑнӑхнӑ.

Лоцман тата ылттӑн шыракан Сэмюэль Клеменс ҫак кунтан пуҫласа хаҫатра репортер пулса ӗҫлеме тытӑннӑ. Унӑн кулӑшла тата ҫивӗч чӗлхепе ҫырнӑ заметкисем вулакансене питӗ килӗшнӗ. Клеменс хӑйне валли «Марк Твен» ятлӑ псевдоним суйласа илнӗ. Ку ята вӑл Миссисипинченех илсе килнӗ. «Марк Твен!» тени шыв ҫинчи чӗлхепе «икӗ чалӑш паллӑ ту» тенине пӗлтернӗ. Икӗ чалӑш пулсан, вара шыв тарӑнӑшӗ меллӗ, лоцман суднӑна шикленмесӗрех илсе пыма пултарать.

Хаҫатра репортер пулса ӗҫлесси Марк Твена часах кичемлентернӗ: ӑна урамра пулса иртекен хирӗҫӳсемпе ҫапӑҫусем ҫинчен ҫырма йӑлӑхтарса ҫитернӗ. Унсӑр пуҫне тата шутник репортерӑн полицисемпе хирӗҫӳсем пуҫланса кайнӑ. Юлташӗпе пӗрле вӑл тусем хушшине, каярахпа унӑн ҫывӑх юлташӗ—чаплӑ писатель Брет Гард ҫырнӑ вырӑнсене, старательсен лагерьне тухса кайнӑ.

Ҫак лагерьте, кичем хупахра, Марк Твен Бен Кун ятлӑ ӗлӗкхи лоцмана тӗл пулнӑ. Кӑмака умӗнче тӗлӗрме пуҫланӑ старик калакан вӗҫӗ-

хĕррисĕр вăрăм историне итлеме никамăн та чăтăмĕ ҫитмен. Анчах Марк Твена вăл каласа кăтартнисем килĕшнĕ. Пĕрре ҫапла, хĕллехи вăрăм ҫĕрте, ватă лоцман сикекен шапа ҫинчен истори каласа панă. Пĕр ҫын шапана сикме вĕрентнĕ, тепри унпа кирек мĕнле шапа та ҫак вĕреннĕ шапаран сиксе иртерет тесе тавлашнă. Вара вăл вăрттăн вĕрентнĕ шапа ҫăварне пăшал йĕтри тултарнă; шапа йывăрланнă, унăн хуҫи вара тавлашура выляса илеймен. Темиҫе уйăх иртсен, Марк Твен ҫак историне аса илсе, «Сикекен шапа» ятлă калавне ҫырнă. Ҫак чи малтанхи калав Марк Твена писательсен шутне кĕртсе чапа кăларнă. Шӳт тума юратакансем Марк Твенран: «вăл шапа ҫине утланса чапа сиксе тухрĕ» тесе кулнă.

Ҫапах та Марк Твен хăйне писатель тесе шутламан. Вăл корреспондент пулса Гавай утравĕсем ҫине кайнă, унтан ҫав утравсем ҫинчи пурăнăҫ ҫинчен лекцисем вуланă. Лекцисем вуланă чухне вăл халăха шутсăр култарнă, ҫавăнпа Сан-Францискора, Невадера, Вирджинире, Нью-Иоркра пиншер итлекенсем куҫҫулĕ тухиччен ахăрса, урисемпе тапăртатса алă ҫупнă. Марк Твен ҫĕнĕрен корреспондент пулса аякри ҫĕршыва туристсене Палестинăна илсе каякан пароходпа ҫулҫӳреме кайнă. Ҫак ҫулҫӳрев ҫинчен вăл «Простаки за границей» ятлă питĕ паха кĕнеке ҫырнă, вара пĕтĕм Америка ăна талантлă писатель тесе шутланă.

Чăнахах та унăн таланчĕ пиҫсе ҫитнĕ. Вăл пĕр кĕнеке хыҫҫăн теприне ҫырнă. Ҫакă унăн чунхавалла ҫирĕп творчество пулса тăнă. Писателĕн каласа кăтартмалăх темтепĕр пулнă. Вăл

хăй ĕмĕрĕнче нумай курма ĕлкĕрнĕ. Вуникĕ çултан пуçласа вăл хăйне валли хăй çăкăр ĕçлесе тупнă. Вăл темиçе тĕрлĕ професси те тутанса курнă: наборщик, лоцман, офицер, старатель, репортер тата лектор. Вăл Америкăна лайăх пĕлнĕ: пысăк хуласене те, пĕчĕк поселоксене те. Тăнĕ унăн питĕ лайăх, пысăк писателĕн тăнĕ пулнă: вăл унăн хăй пурăнăçĕнче тĕл пулнă питĕ нумай событисене, çын сăнĕсене уççăнах усранă. Вăл «Аякри Хĕвеланăçĕ çинчен» ятлă кĕнеке çырнă, кунта вăл старательсен хушшинче хăйпе тĕлĕнмелле япаласем пулса иртни çинчен аса илсе кăтартнă. Кĕнекере геройсем чĕрĕ çынсем пекех курăнса тăнă. Пур япалара та Марк Твен кулăшла енсене курма пĕлнĕ; унăн ырă кăмăлпа чĕререн тухакан кулăшĕ вулакансене илĕртнĕ, çак кĕнеке страницисенчен вĕсем уйăрăлма та пултарайман. Унтан Марк Твен Ганнибал ятлă пĕчĕк хулара пурăнса иртнĕ, хăйĕн ача чухнехи пурăнăçне аса илсе «Том Сойер темтепĕр курса çӳренисем» ятлă кĕнеке çырнă. «Ку приключенисенче нумайăшĕ чăн пулни те пур», тесе каланă вăл кĕнекен пуçламăшĕнче. Вăл чăнах çапла пулнă. Том ячĕпе вăл хăйĕн çинчен, Сид ячĕпе Генри шăлнĕ çинчен, Полли мăнаккăшĕ ячĕпе хăйĕн амăшĕ çинчен çырнă. Гек Финн та чĕрĕ çынах пулнă, вăл унăн яланах çывăх пурăннă тусĕ Том Блэнкепшип пулнă; Джо Гарпер та тахçанах унăн юлташĕ—Бжон Дригге пулнă. Марк Твен çак кĕнекене ырма-канма пĕлмесĕр хăвăрт: кунне вăтăршар, аллăшар страница çырнă.

«Том Сойер темтепĕр курса çӳренисем» кĕнекене пăлханмасăр вулама май пулман. Ку кĕ-

неке часах Америкăпа Европа ачисен чи юратакан кĕнеки пулса тăнă. «Том Сойер темтепĕр курса çӳренисем» кĕнеке хыççăн Марк Твен «Принцпа ыйткалакан», «Миссисипи çинчи пурăнăç», «Геккельбери Финн темтепĕр курса çӳренисем», «Артур король çуртĕнче пурăнакан Янка» кĕнекесем тата нумай калавсем çырнă. Кашни çĕнĕ кĕнеки çĕнĕ япаласем çинчен каланипе, хăйĕн çивĕч ăслăлăхĕпе, ăста шӳт туса кулнипе вулакансене тĕлĕнтернĕ. Никам та Марк Твен пек савăнăçлă çырма пĕлмен, ун пек никам та çынăн йăлисемпе пурăнăçĕнчи шӳтле вырăнне çивĕч те тĕрĕс асăрхаттарма хăйман.

Вăл питĕ чаплă кулăш ăсти пулнă, анчах унăн çитменлĕхсемпе айван çынсем çинчен тăрăхласа çырма хăюлăхĕ çитмен. Марк Твен творчестви нихăçан та вырăс литературинче Салтыков-Щедрин творчестви пек паллă вырăн йышăнман. Хăйĕн кĕнекисенче Марк Твен нихăçан та эксплоатаци хăрушлăхĕсемпе, пăсăлса кайнă капитализмла обществăн хăрушă киревсĕрлĕхĕсемпе кĕрешмен. Капитализмла строй кирек мĕнле ирĕклĕхе те, писатель ача чухне кăнтăрти Ганнибал ятлă пĕчĕк хулара тӳссе ирттернĕ йывăрлăхпа пусмăрсенчен те ытларах пĕтерсе пынине, çĕр чăмăрĕ çинче хăшпĕр халăхсене тĕпренех пĕтерсе лартнине, ĕçхалăхне чуралăхра тытса пурăннине çакнашкал çивĕч куçлă писатель ниепле те курмасăр тăма пултарайман. Марк Твен империализма курайман; колонисенчи «тĕрлĕ тĕслĕ» халăхсене пусмăрланине вăл чĕререн тӳсеймен; вăл Российăра революци тухса патша самодержавине тĕп туса хутăрччĕ тесе те ĕмĕтленнĕ. Анчах вăл хăй капитализмла обществăпа

питĕ тачă çыхăнса тănă, çавăнпа унăн хăйĕн çĕршывĕнче—Пĕрлешӳллĕ Штатсенче революци тума сĕнес шухăшĕ те пулма пултарайман.

«Эпĕ тĕнче пуçланиччен пурăннă пулсан,— тенĕ вăл пĕрре,—Каина уççăнах айăпличчен хампа пĕрле пурăнакансен шухăшне ыйтса пĕлнĕ пулăттăм, мĕн шутлатчĕç-ши вĕсем Каина вĕлерни çинчен. Манăн тен, хамăн уйрăм шухăш пулнă пулĕччĕ, анчах эпĕ ăна ĕçе тĕплĕн пĕличчен каламан пулăттăм».

Акă мĕншĕн унăн творчестви хĕçпăшал пулса тăман. Хăй çыхăнса тăракан класа хирĕç тухма унăн хăюллăхĕ çитеймен.

Çакăн пиркиех вара унăн творчестви вăйсăрланма пуçланă. Юлашки çирĕм çул хушшинче вăл «Том Сойер» е «Артур король çуртĕнче пурăнакан Янка» ятлă кĕнекесемпе танлашакан произведенисем çырман.

*М. Гершензон.*



## СИКЕКЕН ШАПА

Хĕвелтухăçĕнче пурăнакан манăн пĕр çывăх тус вată Саймон Уилер патне кĕрсе, унăн ĕлĕкхи юлташĕ пулнă Леонид Смайли çинчен ыйтса пĕлме çырчĕ.

Эпĕ вăл хушнине пурнăçларăм, акă мĕн пулса тухрĕ унтан.

Халĕ эпĕ чухласа илетĕп: Леонид Смайли тĕнчере те пулман иккен; ман юлташ та вăл çынна нихăçан та пĕлмен, эпĕ ун пирки Уилер старикрен ыйтсан, вăл мана урăх Смайли, Джим Смайли çинчен аса илессине шутланă. Çак Джим çинчен пĕр-вĕçĕмсĕр, маншăн пулсан йăлтах усăсăр тата вилмелле кичем каласа кă-

тартни мана чутах тăнран кăларса яратчĕ. Енчен, ман çывăх тусăм чăнахах та çавăн пек тăвас тенĕ пулсан, вăл вара калама çук лайăх пулса тухатчĕ.

Энджельски шахтăсен пĕр пĕчĕк поселокĕнче, çурри ишĕлсе пĕтнĕ, çыннисем пăрахса кайнă трактирте Саймон Уилер кăмака умĕнче тĕлĕрсе ларатчĕ. Эпĕ вăл хулăм çын пулнине, çутă пуçлине, пит-куçĕнчен пăхсан, ырă кăмăллине асăрхарăм. Вăл вăранчĕ те манпа паллашса ал тытрĕ. Эпĕ ăна хамăн пĕр çывăх тус хăйĕн ачаранпах пĕрле пурăннă çывăх юлташĕ Леонид Смайли пирки ыйтса пĕлме хушни çинчен каласа патăм. Мистер Уилер çак Леонид Смайли çинчен мана мĕн те пулсан пĕлтерсен, эпĕ ăна питĕ пысăк тав тăвăттăм, тесе хушса хутăм.

Саймон Уилер мана кĕтессе хĕстерсе лартрĕ те пуканĕпе çула картларĕ, хăй пуканĕ çине ларса калама пуçларĕ.

Вăл пĕрре те кулмарĕ, пĕрре те сиввĕн пăхмарĕ, нимĕнпе те пĕрре те интересленмерĕ. Хăйĕн вĕçĕ-хĕррисĕр вăрăм сăмахне каласа пĕтеричченех вăл хăйне питĕ мăнкăмăллăн тытрĕ. Эпĕ вара вăл ку историре кулăшла япала пĕрре те курманнине, çак истории вăл пысăк хак парса хисепленине, унăн икĕ геройне те пултаруллă та пысăк ăс-тăнлă çынсем вырăнне шутласа савăннине ăнланса илтĕм. Эпĕ ăна пĕрре те чармасăр, хăй мĕнле пĕлнĕ çавăн пек калама ирĕк патăм.

«Леонид ... хм ... Эсир Лео... тетĕр. Пĕлместĕп... Тахçан пĕрре Джим Смайли ятлă çын пурăнатчĕ кунта. Вăл хĕлле, хĕрĕх тăххăрмĕш çулта, е çуркунне, аллăмĕшĕнче—астумастăп, пурăнатчĕ пулмалла. Пĕр сăмахпа кала-

сан, çак иккĕшĕнчен пĕр çулĕнче, мĕншĕн тесен эпĕ пĕлетĕп, Джим пирĕн поселока малтанхи хут килнĕ чухне пысăк шлюзăллă валашкана туса пĕтерменччĕ-ха. Питех тавлашма юратакан çынччĕ вăл, тавлашакан çын тупăнсан, куçа мĕн лекнĕ, çавăн çинчен укçа хурса тавлашатчĕ; тавлашакан пулмасан, вăл хăйпе-хăй тавлашатчĕ. Тавлашура унăн яланах ĕçĕ ăнатчĕ, калама çук ăнатчĕ: вăл ялан тенĕ пекех выляса илетчĕ. Ун умĕнче мĕн çинчен те пулсан аса илсен, Джим çавăнтах тавлашма сĕнетчĕ, çитменнине кирек мĕн чухлĕ укçалла та тавлашатчĕ. Ăçта та пулин лашасене ăмăртса чуптараççĕ пулсан, вăл унта пурпĕрех çитет, епле пулсан та, купипех укçа выляса илет е пĕр çип юлмичченех выляса ярать; йытăсем çапăçаççĕ-тĕк—вăл тавлашать; кушаксем çапăçаççĕ-тĕк—вăл тавлашать; автансем тӳпелешеççĕ-тĕк—вăл тавлашать... Вăл çеç-и: карта çинче икĕ вĕçен кайăк ларнине куратчĕ те, хăшĕ малтан вĕçсе каять тесе тавлашма сĕнетчĕ. Пухусенче вăл яланах Уокер пастор хамăр таврари чи паллă сӳпĕлти тесе тавлашатчĕ, кунта та вăлах çиеле тухатчĕ. Калăпăр, вăл хир хăнкăли ăçта та пулсан йăраланма хăтланнине курсан, вăл çавăнтах—хăнкăли хуть ăçта каять пулсан та, ăна çавăнта çитме мĕн чухлĕ вăхăт кирлĕ тесе тавлашма сĕннĕ пулĕччĕ. Енчен, эсир ăна сăмах çинче тытсан, хăнкăли хăть кирек ăçта шуса çитме пултартăр, унăн хыççăн кайса хăй ăçта пуласси нчен тата мĕн чухлĕ кайма лекессинчен шикленмесĕрех, Мексикăна çитиех кайма хатĕрччĕ.

Кунта Смайлине нумайĕшĕ пĕлеççĕ, вĕсем те ун çинчен каласа панă пулĕччĕç. Çапла, уншăн

пулсан пурте нимĕн те марччĕ,—вăл кирек мĕн çинчен те тавлашма хатĕрччĕ. Пĕрре Уокер арăмĕ хăрушă чирпе чирлесе нумай выртрĕ. Вăл вырăн çинчен те тăраймасть пулĕ тесе хăратчĕç. Тепле пĕр ирхине Смайли пастортан арăмĕн сывлăхĕ çинчен ыйтса пĕлнĕ. Пастор ăна тав турра, вăл халь ĕлĕкхинчен самайрах, тен часах сывалĕ, тесе каланă. Смайли вара нимĕн шухăшламасăр:

— Вăл ыран вилет тесе пĕррене хирĕç иккĕ çурă лартатăп, — тенĕ.

Çак Смайлин кĕсре пурччĕ. Ăна улитка тесе чĕнетчĕç, анчах ăна шӳт туса çеç çапла чĕннĕ, мĕншĕн тесен вăл улиткăран хытăрах чупатчĕ. Вăл питĕ лӳпперччĕ, те астмăпа, те чахуткăпа асапланатчĕ. Çапла пулин те вăл яланах выляса илетчĕ. Ăна яланхи пекех чупма икçĕр ярд вирçе паратчĕç, малтан унтан пурте иртсе каятчĕç. Вĕçне çитеспе вăл вара хавхаланса каятчĕ, урнă пек вĕçтеретчĕ, сикетчĕ, кайри урисене ывăтса пĕлĕт пек тусан çĕклетчĕ, хартлататчĕ, тулхăратчĕ, яланах юпа патне çур пуçпа та пулсан малтан пырса тухатчĕ.

Çавнашкалах унăн пĕр пĕчĕкçеç ырхан йытă пурччĕ; пăхмашкăн—пĕр пуса та тăмастчĕ, ĕçсĕр сулланса çӳреме е ăçтан та пулсан мĕн те пулин лектерме май çук-и тесе, шăршласа çӳреме анчах юрăхлăччĕ. Анчах вăл йытă пирки тавлашса укçа хурсанах, вăл вара йăлтах урăх йытă пулатчĕ; аялти янаххи тăсăлма пуçлатчĕ, çăварĕ хĕрнĕ кăмака çăварĕ пек йăлтăртататчĕ. Ун чух вара ăна кирек мĕнле йытă та çавăрса илсе ăскама, çыртма, çурăм урлă ывăтма пултаратчĕ, Энерью Джексон, — вăл йытта çапла чĕнетчĕç, —



Энерью Джексон кунпа питех килĕшнĕ пекех тата урăхла пулассине кĕтменпе пĕрех хăлхине те вылятмастчĕ. Çав вăхăтра тепĕр йытă майлисем кĕсъисенче пĕр пус юлмиччен укçа хисепне ӳстернĕçемĕн ӳстеретчĕç; лăпах вара çак вăхăтра вăл хăйĕн тăшманне кайри уринчен ярса илетчĕ те çаплипех çакăнатчĕ, çапăçу пĕтнине пĕлтерекен паллă кăтартиччен çулталăкĕпех çакăнса тăма хатĕрччĕ.

Смайли çак йытăпа яланах выляса илетчĕ; хăйĕн йытти кайри урисем çук йытăна хыçалтан ярса илсен çеç вăл выляса илеймерĕ, лешин урисене пăчкăпа касса татнă пулнă мĕн. Çапăçу вăраха тăсăлса кайсан тата тавлашни тăрăх укçасене пĕтĕмпех кăларса хурсан, Джексон хăй юратакан меслетне пурнăçласшăн пулнă, анчах вăл хăйне улталанине сиснĕ. Малтан вăл тĕлĕннĕ пек пулнă, унтан йăлтах халран ӳкнĕ. Ӳпкелешсе вăл Смайли çине: «Мана урасăр йытăпа хирĕçтерсе эсĕ, хуçам, аван мар турăн, урасем маншăн чи кирлисем вĕт, урисем çук пулсан, манăн ниçтан ярса илмелли те çук» тесе каласшăн пекех пăхнă та, çавăнтах выртса вилнĕ. Аван йытăччĕ çак Энерью Джексон, енчен сывă пулнă пулсан, чапа тухатчĕ пулĕ. Пуринчен ытла талант пысăкчĕ унăн. Талант çук-тăк, мĕнле йытă çапла çапăçма пултартăр-ха! Джексон юлашки хут çапăçнине аса илсен, мана яланах кичем туйăнать.

Мĕн кăна çукчĕ-ши çак Смайлин! Йĕкехӳре тытакан йытăсем, автансем, кушаксем—мĕн кирли пурте пур: эсир ăна мĕн пирки тавлашма ыйтсан та вăл яланах хатĕрччĕ.

Пĕрре вăл шапа тытса килне илсе килнĕ те, ăна тĕрлĕрен япаласем вĕрентме пуçланă. Виçĕ уйăх çав шапана вĕрентсех аппаланчĕ, яланах килкарти хыçĕнче вĕрентетчĕ. Вĕрентрĕ - вĕрентрех вара! Хуллен шапана хыçалтан тĕкетчĕ те пăхатăн—шапа сывлăшра икерчĕ пек çавăрăнкалатчĕ, пĕрре е, май килсен, иккĕ çавăрăнатчĕ те тăватă ури çине лач ўкетчĕ, çитменнине яланах ăнăçлă, кушак пекех ўкетчĕ.

Хăйĕн шапи пирки Джим питех те тăрăшатчĕ, кашни кунах ăна сикме хăнăхтаратчĕ. Юлашкинчен, унăн шапи çав тери çăмăл сикме вĕренсе çитрĕ, ăçта та пулсан шăна курсан, пĕрре сиксех кап! анчах тутаратчĕ.

Смайли калатчĕ: шапа пăхса усранине юратать, лайăх воспитани парсан, унтан пурне те тума пулать тетчĕ,—эпĕ ăна ĕненетĕп. Чăнласах эпĕ хам куçпах куртăм, лартрĕ те вăл Даниэл Уэбстера çакăнта урайне,—шапана Даниэл Уэбстер тесе чĕнетчĕç,—тăсарах çеç каларĕ: «Шăнасем, Дан, шăнасем!» терĕ. Унччен те пулмарĕ, Даниэл сасартăк тенкел çине сиксе шăнана тытрĕ те, каялла урайне пылчăк чăмакки пек лачлатрĕ; унтан нимĕн пулман пекех кайри урипе хăлхи хыçне хыçма пуçларĕ, — ытти шапасем тума пултарайманнине вăл туни çинчен тавçăрма асра та çук тейĕн.

Çавăн пек пултаракан хăюллă шапана халиччен тĕнчере те никам та курман. Тикĕс çĕрте аякка сикмелле пулсан, вăл пĕрре сиксех пĕр чалăш вăрăмĕш каятчĕ. Аякка сикесси—унăн чи юратнă ĕçĕччĕ. Ун пек сикмелле пулсан, Смайли пĕр пус юлмичченех тавлашма хатĕрччĕ. Смайли хăйĕн шапипе мухтанатчĕ, — чăнах та мухтанма

сăлтавĕ те пурччĕ, мĕншĕн тесен нумай çӳресе курнă çынсем кун пек шапана нихăçан та курман тетчĕç.

Смайли хăйĕн шапине пĕчикçеç читлĕхре тытса усратчĕ, килĕнчен кайнă чухне ăна яланах хăйпе пĕрле илетчĕ, мĕнпур тĕл пулакан пур çынна та вара тавлашма сĕнетчĕ.

Пĕрре çапла, темĕнле палламан çын тĕл пулса чарнă та:

— Сирĕн читлĕхре мĕн пур вара?—тесе ыйтнă унтан.

Смайли ăна нимĕн те пулман пек:

— Попугай та, канарейка та мар, ахаль шапа кăна вăл,—тенĕ.

Палламан çынĕ шапана илсе алли çинче лайăххах çавăркаласа пăхнă та:

— Хм ... Авă мĕн. А, мĕне юрăхлă-ха вăл?—тенĕ.

— Кавалерасск графствинче мĕнпур шапаран чи лайăх сикет вăл,—тенĕ ăна Смайли.

Палламан çынĕ читлĕхе тепĕр хут илсе шапана пăхнă, унтан Смайлине калла панă та:

— Ну,—тенĕ,—ку шапара нимĕн тĕлĕнмелли те курмастăп. Чăн-чăн ахаль шапах вĕт ку.

— Тен, курмастăр та пулĕ,—тенĕ Смайли.— Тен, эсир шапасене пĕлетĕр пулĕ, тен, пĕлместĕр те пулĕ; калăпăр, сирĕн опыт та пулĕ, е ахаль анчах интереслентĕр пулĕ. Кирек мĕнле пулсан та эпĕ хам шухăша каларăм, вăл Кавалерасск графствинче кирек мĕнле шапаран та лайăх сикет тесе эпĕ хĕрĕх доллар лартатăп.

Палламан çынĕ пĕр самант шухăшласа тăнă та:

— Эпĕ кунти çын мар, манăн шапа та çук.

Енчен, манӑн шапа пулнӑ пулсан, эпӗ тавлашнӑ пулӑттӑм,—тенӗ.

Смайли ӑна хирӗҫ:

— Юрӗ, юрӗ, эпӗ шапа илсе киличчен манӑн читлӗхе тытса тӑрӑр-ха,—тенӗ.

Палламан ҫынӗ читлӗхе илсе Смайлин хӗрӗх доллӑрӗ ҫумне хӗрӗх доллар хунӑ та, Смайли килессе кӗтсе ларнӑ.

Вӑл чылай вӑхӑт кӗтнӗ, унтан шапана кӑларса унӑн ҫӑварне уҫнӑ, чей кашӑкӗ илнӗ те, карланкки патне ҫитиччченех пӑшал йӗтри тултарса ҫӗре лартнӑ.

Смайли шурлӑх тӑрӑх чылай ҫӳренӗ, юлашкинчен, пӗр шапа тытнӑ, ӑна палламан ҫынна панӑ та:

— Ӑна Данпа юнашар лартӑр та, малти урисене танлаштарӑр, эпӗ паллӑ парӑп,—тенӗ.

Пӗрре, иккӗ, виҫҫӗ хоп! Сикекенсене иккӗшне те хуллен тӗртсе илнӗ. Ҫӗнӗ шапи малалла сиксе кайнӑ. Даниэлӗ йывӑррӑн анчах сывласа хулпуҫҫине ҫӗклентернӗ, вырӑнӗнчен яхӑнне те хӑпайман. Ҫапла вӑл урайне пӑталаса лартнӑ пекех хускалаймасӑр ларса юлнӑ.

Смайли мӗнешкел тӗлӗнсе кӳреннине чухласа илме пултартӑра? Мӗншӗн ҫапла пулса тӑнине вӑл тавҫӑрса илме те пултарайман.

Палламан ҫынӗ укҫана илнӗ те кайнӑ. Юлашкинчен вӑл:

— Эпӗ хамӑн шухӑшах ҫирӗплететӗп. Сирӗн шапа чӑн-чӑн ахаль шапах мӗн,—тесе хӑварнӑ.

Смайли Даниэл ҫине пӑхса чылайччен ӗнсине хыҫса тӑнӑ. Унтан вара:

— Пӗлес килет, мӗн пулчӗ-ши ку шапана? Мӗншӗн вӑл ҫакнашкалах шыҫӑнса кайнӑ?—тенӗ.



ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
Чебоксары Чувашской АССР



Вăл шапана ĕнсерен тытса çĕкленĕ те тĕлĕнсе кайсах:

— Вăл пилĕк кĕрепенкĕрен кая туртать пулсан, çĕр çăттăр мана!—тенĕ.

Ана вăл пуçхĕрлĕ çавăрнă, шапа çăварĕнчен йĕтре юхса тухнă—икĕ ывăç йĕтре тухнă! Мĕн пулнине вăл питех ăнланса илнĕ, вара урса кайнă та, шапине пăрахса хăварсах палламан çын хыçĕнчен чупнă. Анчах лешĕн йĕрри те пулман. Вара...

Çак вăхăтра Саймон Уилер килкартинчен хăйне такам чĕннине илтрĕ те, мĕн иккенне пĕлме тухрĕ. Тухнă чухне вăл ман енне çавăрăнса çаппа каларĕ:

— Эсир, тусăм, тăхтăр-ха, эпĕ халех килетĕп.

Анчах эпĕ пултарулла Джим Смайлин историне малалла итлесен те Леонид Смайли çинчен ытларах пĕлесси пулмĕ тесе шутларăм, май пур чухне тухса шăвас терĕм.

Анчах алăк патĕнче эпĕ калаçма юратакан Уилер çине çитсе перĕнтĕм, вăл мана тӳмерен тытрĕ те малалла калама тытăнчĕ.

— Çак Смайлин хăрах куçлă сарă ĕне пурччĕ. Çав ĕнен хӳри вырăнне банан майлă пĕр татăк ларатчĕ...

Вăхăт çуккипе тата мĕскĕн ĕне çинчен итлессĕм те килменнипе эпĕ сывпуллашрăм та, ăçтан килнĕ унталла тухса утрăм.



## ЯЛХУÇАЛĂХ ХАÇАТНЕ ЭПĔ МĔНЛЕ РЕДАКЦИЛЕРĔМ

Инкекрен хăтăлас çуккине сиссех эпĕ вăхăтлăха ялхуçалăх хаçат редакторĕ пултăм. Нихăçан тинĕсре пулса курман çынна корабль ертсе пыма хушнă пулсан та çав сисĕмех пулнă пулĕччĕ. Анчах эпĕ çав тери хĕсĕнсе çитрĕм, çавăнпа мана шалу укçи ытлашши пулассăн туйăнмарĕ.

Яланхи редактор пĕр эрнелĕхе отпуска карĕ. Эпĕ унăн условийĕсемпе килĕшрĕм те ун вырăнне йышăнтăм.

Хама каллех ĕçлĕ çын вырăнне шутласа туйса илни мана чăннипех савăнтарчĕ, эпĕ эрнипех

питĕ киленсе ĕçлерĕм. Юлашкинчен, хаçат çапăнса тухрĕ. Манăн ĕç кама та пулсан килĕшӳллĕ пулĕ-ши тесе, эпĕ куна пăлханса ирттертĕм. Каç пуласпа, эпĕ редакцинчен тухнă чухне, аялтан картлашка умĕнче тăракан темĕнле арçынсемпе ачасен ушкăнĕ, команда парса сирĕлнĕ пекех сирĕлчĕç те, вĕсен хушшинчен иккĕшĕ е виççĕшĕ:

— Çакă вăл!..—тесе каланине илтрĕм.

Паллах ĕнтĕ, эпĕ хама-хам пĕлĕте çитнĕ пекех туйрăм. Ирхине эпĕ алăк умĕнче ĕнерхи пек интересленекен çынсен ушкăннех куртăм. Урамра çынсем унта та кунта пĕрерĕн е икшерĕн тăнă та, ман çине пăхса интересленеççĕ. Эпĕ çите пуçласан, çынсен ушкăнĕ уйăрăлса кутăн чакрĕ, ман хăлха:

— Пăхăр-ха, унăн куçĕсем епле!—тенине илтсе юлчĕ.

Эпĕ хама пурте лайăх пĕлнине сисмен пек турăм, анчах хам ăшăмра чунтан савăннипе пурин çинчен те мăнаккана çырса пĕлтерес терĕм. Эпĕ çӳлĕ мар картлашка çинчен редакцине хăпартăм, алăк патне çитиччĕнех пӳлĕмре савăнăçлă сасăсемпе хытă янраса кулнисене илтрĕм. Алăка уçсан, эпĕ ялти йĕкĕтсем майлă икĕ çамрăк çынна куртăм. Эпĕ кĕрсе тăрсан, вĕсен пичĕсем тăсăлса шуралса кайрĕç, иккĕшĕ те пуçран çапнă пек, шăтăр-шатăр кĕмсĕртеттерсе кантăкран тухса вăркăнчĕç. Çак кĕтмен çĕртен пулнă япала мана тĕлĕнтерсех ячĕ.

Ҫепĕр вăтăр минутран кабинета вăрăм, кăтрарах сухаллă, хитре, анчах сивĕ сăн-сăпатлă чылай çулти джентльмен пырса кĕчĕ. Эпĕ ăна пукан патăм. Вăл ларчĕ. Ахăрнех, унăн пуçĕнче



йывăр шухăш пулнă пулмалла. Вăл цилиндрн хывса ăна çĕре лартрĕ, ун ăшĕнчен хĕрлĕ пурçăн тутăр тата пирĕн хаçата кăларчĕ.

Хаçата вăл хăй чĕркуççи çине сарса хучĕ, куçлăхне тутăрпа шăлнă май çапла ыйтрĕ:

— Эсир-и çĕнĕ редактор?

Эпĕ каларăм, эпĕ терĕм.

— Эсир халиччен ялхуçалăх хаçатне нихăçан та редакцилемен-и?

— Çук,—терĕм эпĕ.—Ку манăн пуçламĕш опыт.

— Вăл паллах çав. Хăçан та пулсан пурăнăçра ялхуçалăх ĕçне ĕçлесе курнă-и эсир?

— Çук... Ĕçленĕ-ши? Ĕçлемен темелле.

— Манăн сисĕм мана улталаман,—терĕ те джентльмен куçлăхĕ тăрринчен ман çине çиленсе пăхса, хаçатăн кирлĕ вырăнне вулама авантарах пултăр тесе, ăна хуçлатса хучĕ.—Эпĕ сире манăн сисĕме пăлхантаракан „редакцинчен“ ятлă çак умстатьяна вуласа парас тетĕп. Итлĕр те ăна, калăр, эсир çырнă-и çак йĕркесене: „Çарăка нихăçан та татма юрамасть, çапла туни ăна сиен кӳрет. Хăвăрăн работнике çӳлти турачĕ çине хăпарса йывăçне силлеме хушсан, авантарах пулать“. Ну, мĕн калăр-ши эсир кун пирки? Мана çак йĕркесене эсирех çырнă пек туйăнать.

— Ун пирки мĕн калам-ши сана? Вăл лайăх канаш тетĕп эпĕ. Вăл усăллă канаш тетĕп. Эпĕ пĕрре те иккĕленместĕп, пĕр округра пиçсе çитмесĕрех турачĕсем çинчен татнипе миллионшар бушел* çарăк пĕтет, работнике çӳле хăпарма хушса йывăçне силлентерсен...

*) Бушел—виçе хисепĕ, пĕр центнера яхăн.

— Хăвăрăн асаннӳне тытса силлĕр! Çарăк йывăç синче ӳсмест вĕт!

— А! Ӳсмест? Питĕ аван! Кам калать ӳсет тесе? Эпĕ çырнине урăхла ăнланмалла пулнă. Çапла, урăхла. Кирек кам та, пĕр тумлам ăс пур кашни çынах, работникĕн тăсăлса выртакан çарăк турачĕсене силлемеллине ăнланать ĕнтĕ.

Çакăн хыççăн вăл тăрса хаçата татăкăн-татăкăн вакларĕ, урайне пăрахса таптарĕ те, мана санăн пуçăнта сурăх мими тесе хăварчĕ. Унтан алăка хытă хупрĕ те тухса карĕ. Пĕр сăмахпа каласан, хăйне-хăй çавнашкал тыткаларĕ, çавăнпа та мана вăл темĕншĕн кӳреннĕ пек туйăнчĕ. Анчах эпĕ ăна мĕн кӳрентернине пĕлмерĕм, çавăнпа ниепле те ун хуйхине çăмăллатма пултараймарăм.

Ун хыççăн часах ман алăкран вăрăм, вилнĕ çын майлă, хулпуççи таран усăнса тăракан сайра çӳçлĕ, питçăмартийĕсемпе янаххи çинче эрни-эрнипе хырманнипе шăртланса кайнă сухаллă çын сирпĕнсе кĕрсе пӳрнине тути патне çыпăçтарса алăк патĕнчех хытса тăчĕ. Пуçĕпе тата пĕтĕм тăлпăвĕпе малалла ӳпĕнсе темĕскер итленĕ пек тăрать. Пĕр самант шăп пулчĕ. Унтан вăл алăка питĕрчĕ те чĕрне вĕççĕн утса ман пата çывхарчĕ, вăл чарăннă вырăнтан мана алăпа тытмаллăх çеç хушă юлчĕ, пĕр самант вăл ман çине интересленсе пăхса тăчĕ. Унтан, хĕвĕнчен хуçлатса хунă пирĕн хаçата кăларчĕ те каларĕ:

— Акă! Кăна эсир çырнă. Хытă вуласа парăр мана—часрах! Хăтарăр мана! Эпĕ асапланатăп.

Сăмах хыççăн сăмах вуланă май эпĕ вăл лăпланнине асăрхарăм: пичĕ çинче туртăннă шăнăрсем тӳрленчĕç, хăрана паллисем çухалчĕç, юлаш-

кинчен, унăн сăн-сăпачĕ савăнăçлă уйăх çути çеçенхире хăйĕн çутипе çутатнă чухнехи пекех çиçсе карĕ.

Эпĕ çак сăмахсене вуларăм:

„Вĕçен кайăк тислĕкĕ—питĕ лайăх кайăк, ăна çав тери лайăх пăхса усрамалла. Ăна июнь уйăхĕнчен малтан, е сентябрь иртсен, турттарса тухма юрамасть. Хĕлле ăна ăшă вырăнта тытас пулать, унта вăл хăйĕн чĕпписене пусса кăларма пултарать“...

„Малтанах калама пулать, кăçалхи çул тĕш тырă сезонĕ кая юлать. Çавăнпа та июль уйăхĕнче фермерсене кукуруз тунисем лартма тата хуратул чусти акма сĕнетпĕр“.

„Кавин çинчен. Вăл çĕнĕ Англин вăтам районĕнчи юратнă çырли. Ютçĕршыв çыннисем унтан кукăль тума юратаççĕ, ăна вĕсем пуринчен мала хураççĕ, крыжовникрен та ытларах хаклаççĕ. Выльăх апачĕ пирки те çавнашкалах, ĕнесем валли çак çырла, вĕсен шухăшĕпе, хăмла çырлинчен те лайăхрах, мĕншĕн тесен вăл тутă тытать, сĕтеклĕ тата тутлă. Кавин,—пăрçана тата çавнашкал ытти çимĕçсене шута илмесен,—çурçĕр енче ӳсекен апельсинсен йăхĕнчи пĕртен-пĕр çимелли çимĕç. Анчах ăна ĕлĕкхи пек пахчара пӳрт умне лартса ӳстерес мода хăвăрт тухать, мĕншĕн тесен кавин йывăççĕ сулхăн сахал панине хальхи вăхăтра пурте ăнланса илчĕç...“

„Халĕ, ăшă кунсем çывхарса килнĕ чухне, хур аçисем вăлчă пăрахнă чухне...“

Манăн пăлханса итлекен çын ура çине сиксе тăрса, ман пата чупса пычĕ те, манăн алăсене чăмăртаса каларĕ:



— Тӗрӗс, тӗрӗс, ҫитет! Халӗ куратӑп: эпӗ ухмаха ермен иккен. Эсир пӗтӗмпех, эпӗ вуланӑ пекех вуларӑр—сӑмахсем пурте тӗрӗс. Ну, ютҫӗршыв ҫынни, паян ирхине ҫак йӗркесене пуҫласа вулама тӗл килсен, хама-хам ҫапла каларӑм: кун пек пуласса эпӗ халиччен шанманччӗ, чӑнах та мана ҫывӑх ҫынсем асӑрхасах тӑратчӗҫ, анчах халӗ эпӗ хам чӑнласах ухмаха тухнине ӗнентӗм, терӗм. Ҫакна ӑнланса илсенех эпӗ хаяррӑн кӑшкӑрса ятӑм, ахӑртнех эсир мана икӗ милтен те илтнӗ пулӑттӑр. Камӑнне те пулсан карланкине касса татас тесе, эпӗ килтен сирпӗнсе тухрӑм, мӗншӗн тесен хӑвӑрах ӑнланатӑр, хӑҫан та пулсан ҫакнашкал пулассине эпӗ малтанах пӗлсе тӑнӑ. Ҫавӑнпа та ку ӗҫе тӳрех пӗтерсе хурсан, авантарах пулмӗ-ши? Хам ухмаххине лайӑхрах тавҫӑрса илес тесе, эпӗ тепӗр хут уйрӑм сыпӑкне вуласа тухрӑм, унтан хам ҫурта тӗпӗ-йӗрӗпе ҫунтарса ятӑм та тухса чупрӑм. Нумайӗшне эпӗ амантса пӗтертӗм, пӗрне йывӑҫ тӑррине хуса улӑхтартӑм, кирлӗ пулсан, эпӗ ӑна унтах тытатӑп. Анчах сирӗн редакци умӗнчен иртсе кайнӑ чухне эпӗ: „Тавай-ха, тепӗр хут тӗрӗслем, урӑх нимӗнле иккӗленӳ те ан пултӑр“, тесе шухӑшларӑм. Халӗ ӗнтӗ иккӗленӳ таврашӗ ҫук, калам сире: леш йывӑҫ ҫине хӑпарнӑ ҫынна телей пулчӗ, каламалли те ҫук, эпӗ ӑна каялла тавӑрӑннӑ чухне шаклаттараттӑм. Сывӑ пулӑр, сэр, сывӑ пулӑр! Эсир манӑн пуҫри йывӑр шухӑша сирсе ятӑр. Енчен, ялхуҫалӑх ҫинчен ҫырнӑ сирӗн заметкӑран эпӗ ӑсран тайӑлмарӑм пулсан, халӗ эпӗ пӗлетӗп, ӑна никам та пӑсма пултараймӗ. Сыв пулса тӑрӑр, сэр!

Çакнашкал амантас, чĕртсе ярас шухăшсемпе хăйне йăпатакан çын мана пăртак тĕлĕнтерчĕ, мĕншĕн тесен эпĕ те хама-хам вăл çынтан уйрăм тăратăп теме пултараймастăп. Анчах тĕлĕнни часах сирĕлсе карĕ, мĕншĕн тесен пӳлĕме чăн-чăн редактор килсе кĕчĕ. (Эпĕ çапла шухăшларăм: эсĕ ман канаша итлесе Египета кайнă пулсан, тен, эпĕ çак ĕçе пĕтĕмпех юсанă пулăттăм, халĕ ĕнтĕ хăвах майлаштар. Эсĕ кайман иккенне эпĕ сиссе тăнă пекех туйса пурăнтăм).

Редактор, салху, кичем, çухалса кайнă пек курăнчĕ. Ватă джентльменпа икĕ çамрăк фермер ватса пĕтернĕ япаласем çине вăл чылайччен пăхса тăчĕ те, юлашкинчен, çапла каларĕ:

— Япăх истори, питĕ япăх! Çилĕм кĕленчине çĕмĕрнĕ, ултă чӳрече кантăкне, плевательницăна тата икĕ çурта лартмаллине ватнă. Ку нимех те марччĕ те,—çитменнине хаçатăн ячĕ пăсăлчĕ, вăл ĕнтĕ яланлăхах тăсăлса пырĕ тесе хăратăп. Чăнах та, нихăçан та ку хаçата хальхи пек ыйтакан марччĕ, нихăçан та çакăн чухлĕ экземпляр салатни çукчĕ, çавăнпа та нихăçан та хальхи пек паллă вырăн йышăнманччĕ. Анчах камăн-ха хăй ухмаха тухнă пирки халăха юраса чапа тухас килĕ? Ырă çыннăм, чăн калатăп сана: урама халăх тулнă, нумайĕшĕ хӳмесем тăррине хăпарса каяççĕ, пурте сан çине хăрах куçĕпе те пулсан пăхса илесшĕн, мĕншĕн тесен пурте сана ухмахланнă тесе шутлаççĕ. Сирĕн умстатьясене вуланă хыççăн вĕсем пурте çапла шутлама тивĕçлĕ те ĕнтĕ. Вăл статьясем пур журналистсене те намăслантараççĕ. Эсĕ çакăн пек хаçата редакцилеме пултаратăн текен ĕмĕте сан пуçна кам чыхса тултарчĕ-ха? Эсир ялхуçалăхри чи çăмăл ый-

тусене те пĕлместĕр пулмалла пек туйăнать мана. Эсир йăранпа сÿрене паллаймастăр. Çулталăкра ĕнесем хăш вăхăтра хăйсен çинчен тĕкне тăкассине калатăр, йĕке-хÿресене алла вĕрентме канашлатăр! Мĕнле те пулин музыка вылясан, устрицăсем лăпланаççĕ те пĕр хускалмасăрах хăйсен вырăнĕнче выртаççĕ тени ытлашши япала вăл, йăлтах ытлашши тата кирлĕ мар япала. Устрицăна никам та пăлхантарма пултараймасть. Вăл яланах пĕр вырăнта выртать. Музыка ăна ниме те кирлĕ мар. Ырă çыннăм! Енчен, эсир хăвăр пурăнăçăрта айванлăхăн чи пысăк запасне пухас тесе ĕмĕтленнĕ пулсан, эсир çак пĕр кун хушшинчех аслă ученăй ятне илме пултарнă пулăттăр. Кун пеккине эпĕ нихăçан та курманччĕ. Эсир хирте ÿсекен каштана тавар тесе шутлатăр, рынăкра вăл паллăран та паллăрах вырăн йышăнса пырать тени,—ман хаçата пĕтерес тесе шутланиех пулать. Халех ĕçлеме пăрахăр та кунтан тухса вĕçтерĕр. Мана отпуск кирлĕ мар. Эсир ман редактор пуканĕ çинче ларнă чухне эпĕ унпа пур-пĕрех усă курайман пулăттăм. Эсир татах мĕне те пулин ырласа сĕнессе кĕтсе эпĕ яланах хăранипе чĕтресе тăнă пулăттăм. „Пейзажлă садоводство“ пайĕнчи устрицăсене усракан садок çинчен çырнине аса илсенех эпĕ чăтма пултараймастăп. Тухса кайăр! Тĕнчере никам та çĕнĕрен отпуск илме хушаймĕ мана. О, мĕншĕн малтанах каламарăр эсир мана ялхуçалăх çинчен нимĕн те ăнланмастăп тесе?..

— Асăрхаттараймарăм сана,—кукуруз туни вĕт эсĕ, пуçланă купăста кучанĕ, йÿç кăшман ывăлĕ?! Ĕмĕрте пирвайхи хут илтетĕп çакнашкал сăмахсене. Татах калатăп сана, эпĕ ĕнтĕ вунпи-

лĕк çул редактор ĕçĕнче ĕçлетĕп, анчах та хаçат редакцилес пулсан, çынăн мĕн те пулсан пĕлес пулать тенине пĕрремĕш хут илтетĕп. Çарăк вĕт эсĕ! Кам çырать иккĕмĕш сортлă хаçатсем çине театр çинчен рецензи? Сапожниксемпе аптека ĕçне вĕренекен ачасен шайки. Çĕр ĕçне эпĕ мĕн таран ăнланатăп, вĕсем те актер ĕçĕнче çавăн чухлĕ кăна ăнланаççĕ, пĕри те унтан ытла ăнланмаççĕ. Кам кĕнекесене критиклет? Хăй пĕр кĕнеке те çырса курман çын кăна критиклет. Кам укçа-тенкĕ çинчен питĕ шавлă умстатьясем çырать? Укçа çумне пырса тĕкĕнмелле мар пысăк ирĕк панă çынсем кăна çыраççĕ. Хĕрлĕ ӳтлĕ индеецсене хирĕç каякан походсене кам тишкĕрет? Вăрçă чухне кăшкăракан индеецсен паттăр сăмахĕсене вигвамран* уйăрма пĕлмен тата нихăçан та томагавкăран** тарма пĕлмен джентльменсем кăна тишкĕреççĕ. Вĕсем нихăçан та тавлашса чупса курман, нихăçан та хăйсен вилнĕ тăванĕсен ӳчĕ çинчен ухă йĕпписем кăларса вĕсене вутта пăрахса çунтарса курман. Эрехе ылханса кам ĕçекенсене хирĕç кĕрешет? Çава шăтăкне кĕнĕ çынсем анчах,—ахăртнех, вĕсем те эрех шăршинчен хăтăлаймаççĕ пулĕ. Кам ялхуçалăх хаçатне редакцилет? Ну-ка, хăвăр пирки калăр-ха? Сăвăсем çыркаланă, уголовнăй романсем, сенсацирлĕ драмăсем çырнă е хулара мĕн те пулсан пулса иртнисем çинчен хаçатра пĕлтерсе тăнă çынсем кăна редакцилеççĕ. Тĕрлĕ майсемпе нимĕн те кăлараймасăр, юлашкинчен, вă-

---

*) Вигвам—индеецсен пӳрчĕ.

**) Томагавка—пуртă, вăл Америкăри индеецсен вăрçă хатĕрĕ вырăнĕнче пулнă.

хăтлăха та пулсан богадельнирен хăтăлас тесе, хăйсене валли ялхуçалăхра ăшă кĕтес тупаççĕ вĕсем. Эсĕ мана хаçат ĕçне вĕрентме шут тытрăн! Сэр, эпĕ вăл ĕçпе пурăнăç çулĕ тăрăх пуçламăшĕнчен тытăнса вĕçне çитиех утса тухнă, çавăнпа та калатăп сана: çын мĕнчул сахалтарах пĕлет, çавăнчул хытăрах шавлать, гонорарне те ытларах илет. Турă пĕлет, енчен эпĕ, вĕреннĕ çын, тăр ухмах пулнă пулсан, енчен эпĕ, хама тивĕçлĕ лăпкă кăмăллă çын,—чăрсăрлăхпа уйăрăлса тăрататăп пулсан, эпĕ çак чунсăр, çынсем харпăр-хăйшĕн анчах пурăнакан тĕнчере хам ята мухтава кăларнă пулăттăм! Сывă пулăр, сэр. Эсĕ манпа мĕнле пултăн, ыттисем те çавăн пекех пулсассăн, сăмах та çук, эпĕ савăнсах каятăп. Анчах эпĕ хам мĕн тумаллине турăм. Хам çине илнĕ ĕçе эпĕ, эсĕ мана мĕн таран пурнăçлама ирĕк патăн, çав таранах пурнăçларăм. Эпĕ санăн хаçатна обществăри пур çынсене те килĕшӳллĕ тăватăп терĕм,—эпĕ халăха килĕшмелле интереслĕ хаçат турăм. Эпĕ унăн тиражне çирĕм пине çитеретĕп терĕм,—эсĕ мана тепĕр икĕ эрне вăхăт панă пулсан, эпĕ ăна çитереттĕмех. Эпĕ сана чи лайăх вулакансем тупса патăм,—çак ялхуçалăх хаçачĕ вăл çынсене нихăçан та курман,—вĕсем хушшинче пĕр фермер та çук, вĕлеретĕн тесен те вĕсем хушшинче эсĕ персик çупкăмĕнчен арбуз йывăçне палласа илекене тупаймăн. Иксĕмĕр уйăрăлса кайнипе эпĕ мар, эсĕ хăвах сиен куртăн, пăрça хутаççи!

Адиос!*

Çапла каларăм та тухса кайрăм.

---

*) Адиос—сывă пул тени пулать.

Редактор **Кузьма Чулгась** Тех. редактор **Ф. Яковлев.**

Послано в производ. 6/IX—40 г. Подписано к печати 28/XI—1940 г.
НТ 2482. Тираж 5000 экз. Объем 2 п. л. Заказ № 598.
Формат бумаги 84×108 1/32.

Гор. Чебоксары, тип. № 1 НКМП ЧАССР

Цена 50 коп.

М А Р К Т В Е Н

# ПРЫГАЮЩАЯ ЛЯГУШКА.

(Рассказы)

на чувашском языке

Госиздат ЧАССР — 1941